## Тӗнче ҫине ҫӗмел ҫинчен тинкертӗм

Тӗнче ҫине ҫӗмел ҫинчен тинкертӗм
Аннепеле тыр вырнӑ чух тахҫан.
Йӗтем ҫинчи тыр кӑшӑлӗ пуль терӗм
Ирхи хӗвел шевлиллӗ тухӑҫа.

Тӗнче ҫине уй варринчен тинкертӗм
Пӗр ӗҫ тытсассӑн мӑшӑр аллӑма.
Тыр-пул ӑсти юхтарнӑ тар пуль терӗм
Ҫӑра калча ҫинчи ҫут сывлӑма.

Тӗнче ҫине йӗтем ҫинчен тинкертӗм
Ҫулсем иртсен пӗр тулӑх кӗркунне.
Ял-йыш чун-чӗринчи
хӗлхем пуль терӗм
Тин сӑвӑрнӑ сар тулӑ кӑшӑлне.

*Ишентей, Н. Тӗнче ҫине ҫӗмел ҫинчен тинкертӗм / Н. Ишентей // Чӑваш литературин антологийӗ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 547.*